

САС ПАЛАЙ ЮРАТЪ

Аа 1	Ăă 2	Бб 3	Вв 4
Гг 5	Дд 6		Ее 7
Ёё 8	Ĕĕ 9	Жж 10	Зз 11
Ии 12		Йй 13	Кк 14
Лл 15	Мм 16	Нн 17	Оо 18

Пп 19	Рр 20	Сс 21	Ҫҫ 22
Тт 23	Уу 24	Ӳӳ 25	Фф 26
Хх 27	Цц 28	Чч 29	Шш 30
Щщ 31	Ъъ 32		Ыы 33
Ьь 34	Ээ 35	Юю 36	Яя 37

ББК 81.635.1–920
УДК 4(Чув) 781(07)
П 31

Пешне А.Г.
Сас палли юрлать.
Азбука поёт.
Ноты, песни – 2021 – 48 с.

Чăваш ачисене вĕрентекен учитель валли.

© Пешне А.Г., 2021

Александр ПЕШНЕ

САС ПАЛЛИ ЮРАТЬ

Ульяновск-2021

С тех пор, как Иван Яковлев, будучи ещё парнем о 23-х годах жизни, создал алфавит свой для чувашей, прошло ровно 150 лет (1871-2021).

Затем, на основе этого алфавита, создавались и буквари различные. И, прежде всего, самим автором, но букваря с музыкальным укладом, где буквы надо было бы изучать певая, история пока не знает. (Имеется в виду на ниве чувашского просветительства).

Вот, в память Великого Учителя и Просветителя нашего Ивана Яковлевича Яковлева, и, в связи с великой датой создания им алфавита, я осмелился рискнуть на создание сего пособия для интересующихся обучением детей азбуке чувашской, как музыкальный букварь.

Музыкальным называется потому, что каждая буква в нём имеет свою мелодию с кратким сказом к ней.

А случилось это потому, что все мы рождаемся со всеми данными матушкой-природой и первый наш крик по рождении и есть та самая музыка, что укладывается в ритм биения сердца.

Как видим – музыка изначально первична в природе.

Исходя из этого, многолетние наблюдения мои и размышления над ними в занятиях с детьми малого возраста подвели меня к выводу: что поётся – то запоминается и лучше, и дольше. Надо лишь помнить: природа не терпит пустоты – что не тренируется, то отмирает.

Оживляющая теорию практика показывает – предлагаемый метод изучения алфавита весьма благотворно отзывается на детском эго – самости детской.

Пожалуй, не лишним будет назвать подобные занятия музыкальной психотерапией.

Тавтапуç
çак кĕнекене
алла тытнă çынна.
Ку – Учитель пулчĕ пуль, тетĕп.

Çак кĕнеке, кĕвĕ-çемĕпе çутă курнă букварь (чăвашла сас палли пуххи пулать), чăваша Çутта тухма пулăшакан кашни Учителе сума суса тата ӳсен-пыран ача-пăчана усă кӳрес тĕлĕшпе хайланчĕ.

Хăш-пĕр чух чăвашăн çĕр пин юрă, çĕр пин тĕрĕ, текелетпĕр. Вĕçкĕнленсе.

Анчах та хальхи вăхăтра йĕри-тавра куç чарса пăхкаласан та чăнни урăхларах курăнать. Ĕлĕкрех, эп астăвасса-ха, ялĕ-ялĕпе, касси-кассипе хут купăс (хутлă пĕрмеллĕ купăс) сасси янратчĕ. Каччи-хĕрĕ пĕрле пухăнса, карталанса савăнса юрлатчĕ. (Картари утăм-пусăм çак тĕлте Хĕвеле хирĕç, Çутă еннелле пулнă.) Акăш евĕрлĕ умлăн-хыçлăн хумлă, меллĕ (ура айĕнче йăваланман, ташă вырăнне турткаланса хыçкаланман). Хĕрĕ те, каччи те пĕр-пĕрин умĕнче хăйĕн пултарулăхне, сăпайлăхне кăтартма тăрăшнă.

Пыра-киле, йăлт пыр уссиллĕ хĕвĕш йыша (общество потребления) сулăннă май, кĕвĕллĕ сассем шĕвеле пуçларĕç. Чăн сăлтавĕ – хамăрта. Йăх-тĕсе, ун йăли-йĕркине, тымарне хака хураймарăмăр.

Çав хушăрах, истори хумĕнче, çитменлĕхсемпе юнашар лайăххи те курăнкалать. Тĕнче хĕсĕр мар теççĕ ăс-тăнлă чăвашсем. Хăш-пĕр чăваш ĕлĕкренех тĕнче юхăмĕпе çӳлелле туртăнмасăр юлман. Пуринчен пĕри ак – Иван Яковлевич Яковлев.

Чăваша, сĕм ĕмĕртен çыру пĕлмен чăваша, Çутта кăларас тесе, çавăнтах, чăваш – чăвашах пултăр тесе, çирĕм виççĕре пыран чăваш каччи чăваш валли сас палли пуххи йĕркелет. Алфавит тетпĕр. Вара ăс-тăнлă вăй-халлă этем йăтайми ĕçе шутласа кăларса, ăна çĕклесе чăваш валли шкул никĕслет. Çав шкулта çамрăксем вулама, çырма, шутлама вĕреннисĕр пуçне тĕнчере музыка пуррине те манмаççĕ, иккен.

Тавҫӑрма пӑхар-ха: ҫут тӗнче пире, кашнине, тӑтӑшах музыка ҫупӑрлать. Туйма пӗлсен, ҫӳҫентерет те. Ҫапла чуна уҫать.

Музыкӑпа туслӑ пулсан вӗренме те ҫӑмӑл: ют чӗлхе те, математика та пуҫа ҫӑмӑлтарах кӗрет. Тӑсса каласан, музыкӑра пӗтӗмпех математика пурӑнать.

Тата ҫакна картас пулать: «Юрла пӗлмен учителе чӑн-чӑн Учитель теме май ҫук», – тенӗ ӗлӗкрен Китай енче.

Ҫак ӑс-халлӑ шухӑш-тӗлӗш чӑваш ачине те чӗмсӗр хӑварман, курӑнать.

Малашне ҫав шкулта вӗренсе тухнисем хӑшӗ чӑн Учитель шайне улӑхать, хӑшӗ – математик, хӑшӗ – поэт-писатель, хӑшӗ – художник, хӑшӗ – композитор пулать. Кашни вӗреннӗ ҫын ӑс-хакӑл ҫитнӗ таран халӑха ҫутта чӗнет.

Вӑхӑтра эпӗ те ача пулнӑ. Шкула кайнӑ. Яковлев алфавичӗпе вӗреннӗ.

Пӗррехинче, пӗрремӗш класра чухне, учитель пире калама ҫук тӗлӗнтерчӗ. Кӗтмен ҫӗртен чипер хӗр кӳлепи евӗрлӗ арча йӑтса кӑларчӗ те арчаран тата хӳхӗм сӑнлӑ темиҫе хӗлӗхлӗ хӑма курӑнчӗ. Ку – сӗрме купӑс пулнӑ, иккен.

Хальччен эпӗр кун пек тӗлӗнтермӗш япала курманччӗ-ха.

Вара учитель, ҫав купӑсӗпе кӗвӗ илсе пынӑ май, Совет Союзӗн гимне юрлама вӗрентӗмӗр. Чӗлхе пӗлмесӗрех.

Пулас лаша тихаранах паллӑ, теҫҫӗ. Анчах та тихине лайӑх пӑхмасан пулас лаши те лайӑхах пулмӗ.

Ҫапла ачан пуласлӑхӗ те ҫемьесӗр пуҫне учительтен те килет. Пирвайхи учительтен – тата та ытларах.

Кам Учитель – мухтанӑр! Тивӗҫпе. Ҫавӑнпа та чи малтан учителе юрлаттарас килет. «Шкул юрласа ярсан – ҫӗршыв та юрлӗ», – тенӗ вӑхӑтри сумлӑ Учитель Сухомлинский.

Чӑнах та, Совет Союз йӗркипе пурӑннӑ чух, ҫаплаччӗ. Ялсенче кашни шкулта, кашни колхозра хорпа юрлакан ушкӑнсем пурччӗ. Хулара та ҫавахчӗ.Тӗслӗхе ак, Японие кӗрсе тухар-ха.

Кунта ачасем çуралнăранпа виççĕрен пуçласа шкултан мĕн вĕренсе тухичченех йышпа юрлаççĕ. Хор, тетпĕр.

Унсăрăн пуçне кашни шкулăн хăйĕн уйрăм кĕвĕ пур – гимн. Вĕренӳ кунĕ вара пурин те гимн юрланă май пуçланать.

Кунтан лайăх ырăпа пĕрлештерекен сăлтав тупма пулать-и?

Шухăша каяр-ха.

Этем ĕмĕр-ĕмĕр хăйне музыка çупăрланине туйман пулсан халь те пулин упăтерех юлнă пулĕччĕ. Ӳсен-пыран сыпăк-хунав сĕм чăвашăн чăн кĕввине чуна хураймасан халăх йышĕ хуллен-ерипен хухса пырĕ.

«Империн (патшалăхăн) телейлĕ шăпи çамрăк йăха пăхса ӳстернинчен килет», – тенĕ сĕм авалтан Грецире.

Çĕршывăн пуласлăхĕ чăнах та ача-пăчана тĕрĕс пăхса ӳстернинчен килет. Çав тĕлĕшпе пирвайхи учитель виçейми яваплă сумлă çын пулса тăрать.

Юрă-кĕвĕ-çемĕ пур енчен те çут çăлтăр еннелле туртакан сиплĕ çул уçать, çавăнпа та ачана чи малтан сăпка юрри кирлĕ. Сăпкара сăпка юррипе чӳхентĕр пулас çын. Пулас анне те çакăнпах тулли пулмалла.

Шкулта музыкăна ăнсăр ниме хумасан та шкул предмечĕсем хушшинче чи сиплĕ предмет пурпĕрех музыка пулать.

«Музыка чун-кăмăла туптать, çемçетет», – тенĕ ăс тăнлă Китай çыннисем.

Авалхи Грецире çамрăксене хĕç-пăшал, çар ĕçне вĕрентнĕ май, ытла урса кайса пăсăласран, çине-çине йăпатакан музыка сĕннĕ.

Çĕр аллă çул хушши ĕнтĕ чăваш, ватти-вĕтти, Яковлев алфавичĕпе усă курать. Çав хушăра пĕр букварь кăна мар пуль çутă курнă. Пурте усăллă пулнă, тейĕпĕр.

Тĕнче ялан пĕр вырăнта тăмасть. Ăна туятпăр. Пурнăç вăхăчĕ шунă май пирĕн тавракурăм улшăнса, ӳссе, сарăлса пырать е пăчăртанать – аталанма тăрăшмасан. Çавна кура эпĕ ăс-хакăл, пиллĕ туйăм çитнĕ таран букварь енне кăшт урăхларах пăхма хăйрăм.

Çапла кĕнеке букварь кĕвĕллĕ, халаплă çуралчĕ. Кашни сас палли тĕлĕшпе – кĕске кĕвĕ, кĕске сăвă-халап сĕнĕнет. Унсăрăн пуçне, кашни кĕнеке флешкăпа çул тытать. Кашни флешкăра – музыка, сас палли кĕвви.

Учителе урок ирттерме питĕ çăмăл пулать. (Майпа аса илтерес: авалтан юрă сăввине халап тенĕ.) Чăнпа, юрласа халаллатăп тени пулать.

Мĕне пĕлтерет-ха çак сĕнен букварь?

Кĕвĕленнĕ сăмах яланлăхах асра юлать. Юрланă май чун савăнать.


Урокра учитель сăвă-халап сăмахĕсене тимлĕн пăхса тухса ачапăчана сăмах пĕлтерĕшне ӳркенмесĕр ăнлантарса парать. Çапла учитель кашнин ăс-тăнне, шухăш-кăмăлне, тавракурăмне хускатса сарăлтарма пулăшать. Пĕр-пĕр сас палли кĕввине флешкăпа е алă айĕнче юрăхлă музыка инструменчĕ пулсан унпа усă курса юрласа кăтартать. (Яковлев шкулĕнче вĕреннĕ учитель хăш вăхăтра та сĕрме купăспа усă курма пултарнă.)

Унтан учитель: «Атьăр пĕрле юрласа пăхар-ха», – тет. Вара ачипăчи учитель çине хавассăн пăхса пĕрле юрлама пăхать.

Пĕрле юрлани – пĕр-пĕринпе ыр кăмăллă ĕçпе çывхарăшни пулать.

Сиплĕ урок пĕтĕмпех учитель пултарулăхĕпе иртет.

Çакнашкал самантсене «музыкальная психотерапия» теççĕ.




Çитĕннĕ çын халĕ эп –
Çичĕ çул ак тулчĕ.
Теттелле выляс темеп –
Ачара вăл юлчĕ.

Аслисем пĕррехинче
Шкула çул кăтартрĕç.
– Кай, вĕрен. Вĕреннинче
Пысăк çын пул, – картрĕç.

Кунсерен, ирпе ирех
Шкула йăр чупатăп.
Вулама... Çырма... Пĕрех
Вĕренни – çăл хакĕ.


Ĕмĕтпе çӳле вĕçеп –
Мĕн пурне пĕлес теп.
Пĕлӳпе пĕрле ӳсеп –
Пĕлĕве кӳлес теп.

А




Ах, аннеçĕм, анне,
Асăмра шав – анне...
Ай-хай, хӳхĕм анне,
Ачаш пилĕм – анне,
Çил-çунатăм – анне.
Ыр хунатăн, анне.

Ă




Ăçталла йăрать ăйăр?
Ăванса йăрать ăйăр?
Ăнсăр мар ăйăр.
Ăнăça ăйăр.
Ăнтăлать йăр-йăр.
Çил çунатлă-тăр.

Б




Баянпа пĕр балалайка
Киленсе кĕвĕ калаç.
Баянпа пĕр балалайка
Киленсе кĕвĕ калаç.
Барыня темелле пуль,
Барыня темелле.
Барыня темелле пуль,
Барыня темелле.

В




Вупăр вăкăр,
Вупăр вăкăр
Вăхăт-вăхăт
Вут вăркăтать.
Вăрт-варт вут вăркăтать
Вĕри вăйпа.

Г




– Ки-га-ки-га-ки-га, –
тет хур аçи.
– Га-га-га-га-га-га-га, –
теç амисем –
Гармони пек.

Д



Йăкăс тумлă депутат
Думăра, хăтра путать.
Дача пурнăçне ырлать,
Дуэтпа хăш чух юрлать.


Е



Епрелёхре
Епёл Емел
Ехёл-ехёл
Ейкеленет.


Епле-ха, тет,
Енчен-енне
Ейў екки
Ейёлет, тет.

Ё




Ё сас пирён пур-и-ха?
Ёлка тетте мар-и-ха?
Ё, ё, ёлка. Савăнмалла мар-и-ха?
Савăнмалла мар-и-ха?

Ĕ




Ĕшнере ĕнтĕ ĕне
Ĕрлешсе ĕшеннĕ.
Ĕçес ĕмĕтпе ĕне
Ĕрĕхсе хĕненнĕ.

Ж



Жасмин ӳсет
Çеçки пӳхет.
Шурă тĕсе
Жюри тĕсет.


З



Занятире завуч
Замазка йăттарчĕ.
Звонок хыççăн савăш
Записка тыттарчĕ.


И

Амин




Илёртет ирпе илем,
тёрёлет.
Ирёлет ирхи илем,
сирёлет.

Й




Йĕлтĕр йăрать
Йĕр, йĕр çурать.
Кăпăш юра
Йăпăш çулать.
Йĕлме йĕлтĕр
Йĕкĕр йĕр, йĕр
Йĕрлет, тĕрлет
Йыша хĕртет.

К




Кукаçипе кукамай,
Кукаçипе кукамай
Киленсе юрлаç пĕрмай
Килĕнче ырлăх пур май.
Киленсе юрлаç пĕрмай
Килĕнче ырлăх пур май.

Л




Лапамра – лаша,
Лапамра – çӳрен лаша.
Пуçне лăс ухать,
Ман çине пăхать.

М




Мулкач майри
макра мар-и?
Мулкач майри
макра мар-и?
Мулкач майри
макăрмарĕ.
Мулкач майри
макăрмарĕ.

Н




Нимене!
Нимене!
Килёр нимене!
Ниме тени ак мён тени?
Ниме тени ак мён тени?
Ниме ёçне йышпа тунu.
Ниме мён вăл? Мён вăл?
Мăн вăй!

О




Ох! Ох! Ох! Ох!
Тăппăртăк!
Ох! Ох! Ох! Ох!!
Ташлăпăр!

П




Пурăннă тет
Патшапа пĕр
Пахчара пĕр
Пакша.
Пахчара мăйăр пасар,
Пахчара мăйăр пасар.
Пăтăр-пăтăр
Мăйăр катать
Пахчара пĕр
Пакша.

Р



Р-р-р – тет арăслан,
Р-р-р – тет яраплан.
Шывсикки кĕрлет-ĕрлет.
Ав, ракета йĕр тĕрлет.


С



Садра, хăтра
Саркайăксем
Савăшаç.


Савăк хутра
Самай хуртсем
Явăшаç.

Ç




Ĕнтĕ çумăр çăвать,
Çумăр çăвать.
Çаптарать шав çĕн çемĕн
Çунăçемĕн.

Т




Тут-туу-ту,
Тут-туу-ту
Туттушкă тăватпăр.
Тăп-пăр-тăп-пăр,
Тăп-пăр-тăп-пăр
Ташă-тĕш тăватпăр.

У




Вăрманта
Улатакка
Унта-кунта
Тук! Тук! Таккать.
Тук! Тук! Таккать.
Тук! Тук! Таккать.

Ӳ




Сӗм кӗтӳ – ӳпре –
Ӳсӗнме тӗтре.
Хӳтлӗх пур – ӳпле,
Ӳхӗрме хӳтре.

Ф




Факир факел çутрĕ.
Физик фикци тупрĕ.
Фермер хире чупрĕ.
Фокусник ал çупрĕ.

Х




Хĕрхенет хĕвел çĕре
Хӳхĕм хум хĕвет сĕре.

Ц




Ав цыган цимбал калать.
Цирк енне хăй пăхкалать.
Юнашар кĕтӳ кашлать,
Йăхĕпе цыган ташлать.

Ч



Чăпар чăхă
Чăпар йăха
Чăпар чĕпе
Чипер пухать.
Кăт-кăт-кăт...
Кăт-кăт-кăт...
Чăпар чăхă
Кăт-кăт-кăт...
Кăт-кăт-кăт...


Ш



Шапа – шапăлти,
Шапа – пакăлти.
Кӳлĕре
Тилĕрет
Шапа... Шапа... Шапа...


– Мĕн хуйхи?
– Туй çуйхи.
Ква!.. Ква!.. Ква!..
Ква!.. Ква!.. Ква!..
Ква!.. Ква!.. Ква!..

Щ




Щитпа хĕçĕн ĕçĕ –
Хӳтлĕхе тивĕçĕ.

Ъ




Сăмаха çак паллă
Хытарать пит халлă.

Ы




Ывăл-хĕрĕ, ывăл-хĕрĕ
Ырлăха ыраш вырать.
Ывăл-хĕре ырă ĕçĕ
Чап сырать.
Ывăл-хĕре ырă ĕçĕ
Чап сырать.




Çемçелет сăмах юмса та
Çемçелет сăмах юмса,
Сассăр паллă хушăнсан,
Сассăр паллă хушăнсан.

Э




Эмел курăк. Эрĕм –
Эмелленес терĕм.
Эмелтен эп – элчĕ –
Эмелçе пĕлтерчĕ.

Ю




Юри юрлас терём,
Юрлас терём.
Юрлакан çын çак юрра
Ырлё терём.
Юрлакан çын çак юрра
Ырлё терём.

Я



Ялкӑшать ялта ялав,
ялкӑшать.
Ятлӑ ярӑмлӑ ялав
ялкӑшать.

Сăпка юрри




Ай-йуй, чк, чк,
Ай-йуй, чк, чк.
Сар Хĕвел анать,
Çĕрĕпе канать.
А-а-ай, йа-а-ай,
А-а-ай, йа-а-ай.

Ай-йуй, чк, чк,
Ай-йуй, чк, чк.
Çут уйăх тухать,
Тĕлĕнсе пăхать.
А-а-ай, йа-а-ай,
А-а-ай, йа-а-ай.

Ай-йуй, чк, чк,
Ай-йуй, чк, чк.
Çăлтăрсем ямаç,
Тĕлĕке чăмаç.
А-а-ай, йа-а-ай,
А-а-ай, йа-а-ай.

Ай-йуй, чк, чк,
Ай-йуй, чк, чк.
Çывăрсам, ачам,
Тĕлĕкĕ – асам.
А-а-ай, йа-а-ай,
А-а-ай, йа-а-ай.

Вальс, ах, вĕçевлĕ



1. Вальс çаврăнатпăр,
Хумăн юхатпăр,
Асăмлă, капăр
Çак юрăра.

Хушма юрламалли: (2 хут)

Пĕр-пĕрне хавас,
Чун-хавал савăш,
Савни, ан манăç
Çак юрăран.

2. Вальс, ах, вĕçевлĕ,
Вăхăт виçевлĕ,
Хамăр çиçевлĕ
Çак юрăра.

Хушма юрламалли: (2 хут)

3. Вальс чипер ташă,
Ытаклă ташă,
Чăн шукăль ташă
Чăн юрăра.

Хушма юрламалли: (2 хут)

Тупмалли


Предисловие 4
Тав сăмахĕ 5
Çитĕннĕ çын халĕ эп 9
А – 1 10
Ă – 2 11
Б – 3 12
В – 4 13
Г – 5 14
Д – 6 15
Е – 7 16
Ё – 8 17
Ӗ – 9 18
Ж – 10 19
З – 11 20
И – 12 21
Й – 13 22
К – 14 23
Л – 15 24
М – 16 25
Н – 17 26
О – 18 27
П – 19 28
Р – 20 29
С – 21 30
Ç – 22 31
Т – 23 32
У – 24 33
Ӳ – 25 34
Ф – 26 35
Х – 27 36
Ц – 28 37
Ч – 29 38
Ш – 30 39
Щ – 31 40
Ъ – 32 41
Ы – 33 42
Ь – 34 43
Э – 35 44
Ю – 36 45
Я – 37 46

Александр Гаврилович Пешне
Сас палли юрлать
Азбука поёт
Ноты и песни на чувашском языке


В авторской редакции
Корректор Е.Н. Троянская
Художник А.Г. Пешне
Компьютерный набор и верстка И.Н. Данилова

Подписано в печать 14.04.2021
Формат 60x84/16
Гарнитура Times New Roman
Тираж 300 экз. Заказ № 063
Отпечатано в «Типография №7» (ИП Филимонов В.В.)
г. Чебоксары, проезд Машиностроителей, 11В
тел. 8 (8352) 22-27-90, факс 8 (8352) 22-27-68
E-mail: tipografia7@mail.ru, сайт www.tipografia7.com

ДЛЯ ЗАМЕТОК

Аа	Бб	Ѣ̀ѣ̀	Вв	Ѵ̀ѵ̀
Гг	Г̀г̀		Ꙗ̀ꙗ̀	Ѣ̀ѣ̀
Дд	Д̀д̀	Д́д́	Ее	Жж
Ж̀ж̀	Зз		З̀з̀	Ии
Йй	Кк	К̀к̀	Лл	Л̀л̀

Мм	М̀м̀	Нн	Н̀н̀	Оо
Пп	П̀п̀	Рр	Р̀р̀	Сс
С̀с̀	Тт		Т̀т̀	Т́т́
Уу	Ӳӳ	Фф	Хх	Х̀х̀
Шш	Ш̀ш̀	Ъъ	Ьь	Ыы



С самого рождения (06.02.1940) живу припеваючи, из-за чего детки прозвали меня песняром.

Мало-помалу годы учительские склонили меня к фольклору.

К фольклору музыкальному, поющему, где еще хоть немножечко теплится душа народа. Душа предков наших.

Но хотелось бы, чтобы явление сие от природы возымело прежнюю силу.

А для этого должна петь школа. Учитель прежде всего.

Желаю всего доброго.